Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

61 (8127) № * Юн кун, 2013 ҫулхи ҫурла (август) уйăхĕн 21-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Макар уйĕ хăвăрт шуралчĕ

**Кĕр аки – 2013**



Е. Андреев яч. хис. хуҫалăхри ака агрегачĕсем патне машинăпа вăрлăх турттарса тăракан Юрий Михайлов водитель.

***Пусу анисем пушă уй ан пулччăр тесе тăрăшаҫҫĕ паян мал ĕмĕтлĕ хуҫалăхсенчи ҫĕр ĕҫченĕсем. Халĕ каланине юлашки ҫулсенче Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ял хуҫалăх производство кооперативĕн ĕҫĕ-хĕлĕнче те асăрхама пулать.***

***Ҫĕр ĕҫченĕн пĕр ĕҫĕ тепринпе ҫыхăнсах пырать. Акă ĕнер кăна иртен пуҫласа сĕм тĕттĕмччен вырмара тăрмашнă хресчен паян уяр вăхăтăн кашни саманчĕпе усă курса ҫитес ҫулхи тухăҫ пирки ĕмĕтленсе кĕрхи культурăсем вăхăтра акасси пирки шутлать. Пĕрисем шутлаҫҫĕ пулсан, теприсем кĕрхи культурăсене акма тухнă та ĕнтĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районта кĕрхи культурăсем акмалли уйсене пĕтĕмпе 785 гектар (18 процент) шуратса хăварнă. Уйрăм хуҫалăхсемпе илсен Е. Андреев яч. хис. кооперативсăр пуҫне Суворов яч. хис. (340 гектар акнă) Ильич яч. хис. (10 гектар) хуҫалăхсем, «Путь Ильича» агрофирма (60 гектар), «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество (75 гектар) кĕр акине кӳлĕннĕ. Уй-хир ĕҫĕсен планĕпе килĕшӳллĕн районăн кăҫал кĕртрисене 4390 гектар акса хăвармалла.***

(Вĕҫĕ 3-мĕш стр.)

## Уяв ҫӳллĕ шайра иртнĕ

**Канашлуран**

Августăн 19-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳҫисемпе канашлу ирттернĕ.

2012 ҫулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2013 ҫулхи июлĕн 30-мĕшĕччен ҫынсене пулăшу панă май влаҫ органĕсен сотрудникĕсем влаҫăн федераци органĕсен электрон сервисĕсене 28780 запрос янă. Кун пирки ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева каласа панă. Кăҫалхи июнь уйăхĕнче влаҫ органĕсен сотрудникĕсем ведомствăсем хушшинчи электрон мелпе 8014 хутчен ҫыхăну тытнă, июль уйăхĕнче – 13874 хут. Кăҫалхи июнь уйăхĕнче ку енĕпе Чăваш Ен Раҫҫей Федерацийĕн субъекчĕсем хушшинче 74-мĕш вырăн йышăннă пулсан, уйăхран 49-мĕш вырăна хăпарма пултарнă.

Апла пулин те влаҫ органĕсем ыйтусене ытларах чухне электрон мелпе мар, ҫырупа яраҫҫĕ. Михаил Игнатьев пĕр уйăх хушшинче лару-тăрăва лайăхлатма, влаҫ органĕсен сотрудникĕсене патшалăх услугисен порталĕпе ҫыхăнтарассине тивĕҫтерме хушнă.

ЧР вĕренӳ тата ҫамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов професси пĕлĕвĕ паракан учреждениесене йышăнмалли кампани мĕнлерех пыни ҫинче чарăнса тăнă.

Шупашкар хулин пуҫлăхĕ Леонид Черкесов тата республика Шалти ĕҫсен министерствин ертӳҫи Сергей Семенов Шупашкарта Хула кунне мĕнле ирттерни ҫинчен пĕлтернĕ. Уяв мероприятийĕсене 70 пин ытла ҫын хутшăннă, эстрада юрăҫисен концерчĕсене, фейерверка 32 пин ҫын курма кăмăл тунă.

Михаил Игнатьев хула влаҫĕсене мероприятиесене лайăх йĕркеленĕшĕн тав тунă, Хулан ҫитес кунне халех хатĕрленме пуҫăнмаллине палăртнă.

**Район уй-хирĕсенче**

## Юлашки гектарсем ҫинче

* Районти пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсемпе хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче вырма ĕҫĕсем вĕҫленсе пыраҫҫĕ. Тĕш тырă культурисене ĕнерхи кун тĕлне 9905 гектар ҫинчен (73 процент) пухса кĕртнĕ. «Восток», «Оринино» хуҫалăхсем, «Агросоюз «Картофель», «Гея» тата «Агро-Че» ООО, В. Горбуновпа А. Толстовăн хресчен (фермер) хуҫалăхĕсем вырма ĕҫĕсене вĕҫленĕ.

* Пĕтĕмпе 17248 тонна тырă ҫапса тĕшĕленĕ. Тухăҫ пĕр гектар пуҫне вăтамран 17,4 центнерпа танлашать. Чи пысăк тухăҫ хальлĕхе А. Афанасьевăн хресчен (фермер) хуҫалăхĕнче – гектар пуҫне 28,5 центнер.

* Улăма 6249 гектар ҫинчен (вырса ҫапнин 63 проценчĕ) пухса тирпейленĕ.

* Ĕнер район уй-хирĕсенче 28 комбайн ĕҫленĕ.

* Районти хуҫалăхсенче ҫак вăхăта 6614 тонна (128 процент) утă, 13763 тонна (92 процент) сенаж, 3710 тонна (28 процент) силос янтăланă.

**ЧР Информполитика министерствинче**

## Барнаулта – слет

Алтай крайĕнчи Барнаул хулинче октябрĕн 22 – 24-мĕшĕсенче ял ҫамрăкĕсен Пĕтĕм Раҫҫейри ҫулленхи слечĕ иртет. Унăн тĕллевĕ – ял ҫамрăкĕсене пĕчĕк тата вăтам предпринимательство ĕҫне-хĕлне йĕркелеме пулăшасси, ыттисен ку тĕлĕшри опычĕпе паллаштарасси.

Слета хутшăнас тесен октябрĕн 1-мĕшĕччен www.altaimolodoi.ru сайтра регистрациленмелле те участник статусне ҫирĕплетни ҫинчен пĕлтернине илмелле.

## СМЭВ вăй илет

Ҫак вăхăта ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвĕсен системипе (СМЭВ) республикăри пур влаҫ органĕсем те усă кураҫҫĕ. Унпа усă курассипе республика иртнĕ уйăх итогĕсемпе Раҫҫей субъекчĕсем хушшинче 49-мĕш вырăнта.

Министерство иртнĕ уйăхра иртернĕ мониторинг ҫавна ҫирĕплетет. Системăпа усă курассине Шупашкарпа Ҫĕнĕ Шупашкар тата Канаш хулисен, Куславкка, Канаш, Шăмăршă, Муркаш, Пăрачкав районĕсен администрацийĕсем лайăххăн йĕркеленĕ.

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвĕсен системи урлă патшалăхăн тата муниципалитетсен 96 услугипе усă курма май пур. СМЭВ участникĕсем шутĕнче ĕҫ тăвакан влаҫăн 15 органĕ, 26 муниципалитет тата 291 ял тăрăхĕ.

## Пулăшу ытлашши пулмĕ

Амур облаҫĕнче пурăнакансем шыв илнине пула пысăк инкек тӳсеҫҫĕ. Ҫавна май облаҫ правительстви пулăшма ыйтать. Ятарлă счет уҫнă:

ИНН 2801123618
КПП 280101001
Получатель УФК по Амурской области (минфин АО л/с 04232003600)
Р/с 40101810000000010003
Банк ГРКЦ ГУ БАНКА РОССИИ ПО АМУРСКОЙ ОБЛАСТИ
г. Благовещенск БИК 041012001
ОКАТО 10401000000
КБК 015 2 07 02030 02 0000 180

«Назначение платежа» тенĕ вырăнта обязательнăй йĕркепе «Добровольные пожертвования на ликвидацию последствий наводнения в Амурской области в 2013 году» тесе кăтартма ан манăр.

**Ыран – РФ Патшалăх ялавĕн кунĕ**

## Ялавăн историйĕ пуян

Раҫҫейре ҫуллен августăн 22-мĕшĕнче Раҫҫей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунне паллă тăваҫҫĕ. Ăна Раҫҫей Федерацийĕн Президенчĕн 1994 ҫулхи августăн 20-мĕшĕнчи 1714 № «Раҫҫей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунĕ ҫинчен» Указĕпе ҫирĕплетнĕ. Раҫҫейăн официаллă майпа ҫирĕплетнĕ уявĕсенчен пĕри пулса тăрать.

1991 ҫулхи августăн 22-мĕшĕнче Мускавра Шурă ҫурт умĕнче официаллă йĕркепе пĕрремĕш хут Раҫҫейăн виҫĕ тĕсрен тăракан ялавне ҫĕкленĕ. Унчченпатшалăх символĕ шутĕнче ҫурлапа мăлатук ӳкернĕ хĕрлĕ тĕслĕ ялав пулнă. Ҫав кун РСФСР Аслă Канашĕн чрезвычайлă сессийĕнче йышăну тунă, хĕрлĕ, кăвак, шурă тĕссенчен тăракан ялава Раҫҫейăн символĕ тесе палăртнă.

Историрен ҫавă паллă. Чи малтан шурă, кăвак, хĕрлĕ тĕссемлĕ ялава вырăссем «Орел» ҫар карапĕ ҫинче Пĕрремĕш Петĕр патша ашшĕ Алексей Михайлович патшара пулнă чухне (1645 – 1676 ҫулсенче патшалăха ертсе пынă) ҫĕкленĕ. «Орела» ҫĕнĕ ялавпа нумаях ишме пӳрмен, Атăл тăрăх Астрахане ҫити ансан ăна Степан Разин майлă ҫынсем вут тивертсе ҫунтарса янă.

Пĕрремĕш Петĕр чăннипех Раҫҫейăн виҫĕ тĕсрен тăракан ялавĕн ашшĕ шутланать. Вăл ăна ашшĕн ас тăвăмне хисеплесе ҫирĕплетнĕ.

**Раҫҫейре**

## Укҫа тенкĕ – спорт валли

Регионсен пĕрлештернĕ спорт командисем валли резерв хатĕрлекен спорт организацийĕсене пурĕ 360 миллион тенкĕ финанс пулăшăвне тивĕҫеҫҫĕ. Раҫҫей Правительствин ертӳҫи Д. Медведев тунти кун субсидисене уйăрса парассине ҫирĕплетнĕ.

Субсидисене «О федеральном бюджете на 2013 год и на плановый 2014 и 2015 годов» саккунпа никĕсленсе парĕҫ. Субсидисемпе регионсем Олимп тата Паралимп вăййисене кĕртнĕ тĕп спорт тĕсĕсемпе тренировка мероприятийĕсем ирттерме уйăркан расхутсене саплаштараҫҫĕ. Вăл шута спортсменсене апатлантарассине те, пурăнассине те, кирлĕ хатĕрсемпе тивĕҫтерессине те кĕртеҫҫĕ.

Правительствăра палăртнă тăрăх ҫак хушăва пурнăҫланипе 2013 ҫулта 1188 специализациленĕ учреждениере пурĕ 55 пин резерв спортсменĕ хатĕрлеме май парать.

**Информаци кунĕ**

## Икĕ ушкăн ҫула тухать

Паян районта черетлĕ информаци кунĕ иртет. Унăн теми – кĕрхи уй-хир ĕҫĕсем, ҫынсен сывлăх шайĕ, Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи вĕренӳ ҫинчен» Саккунĕ вăя кĕнĕ май вĕренӳ системин аталанăвĕн тĕп ҫул-йĕрĕсем ҫинчен, пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх объекчĕсене хутса ăшăтмалли сезон валли хатĕрлесси.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн социаллă политика тата национальноҫ ыйтăвĕсемпе ĕҫлекен комитечĕн председателĕ Петр Краснов ертсе пыракан ушкăн Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕнче, Мăн Сĕнтĕр поликлиникинче, «Карина» обществăра; Чăваш Республикин информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕн сумĕ Любовь Шемарина ертсе пыракан ушкăн Муркашри патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕҫтерекен нумай функциллĕ центрта, Ҫатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмашри информаципе культура центрĕнче пулса курма палăртаҫҫĕ.

**Хамăр инф.**

**Саламлатпăр**



Поздравляем любимую мамочку – **ЯКОВЛЕВУ Галину Петровну** с 50-летним юбилеем.

Единственной, родной, неповторимой
Мы в этот день «спасибо» говорим.
За доброту и сердце золотое
Мы, мама милая, тебя благодарим!
Пусть годы не старят тебя никогда,
Мы, дети и внуки, все любим тебя!
Желаем здоровья, желаем добра,
Живи долго-долго, ты всем нам нужна.

**С поздравлением: сын, дочь, зять, внучка и родные.**



Пирĕн юратнă ҫыннăмăр – Исетерккĕ ялĕнче пурăнакан **Дмитрий Алексеевич АЛЕКСЕЕВ** ҫак кунсенче 75 ҫул тултарчĕ. Ҫак сумлă юбилейпа саламласа эпир ăна юман пек ҫирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми вăй-хал тата телей сунатпăр. Ҫĕр ҫинче мĕн пур ырри сана валли пултăр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр, кĕрекӳ яланах тулли пултăр.

Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей те савăнăҫ. Эпир сана пурте юратапăр, хисеплетпĕр. Пире пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕҫĕн мăнукĕ, хăти-тăхлачисем.**

# Пĕрле пулса сывă пурнăç çулĕ суйлатпăр

Вĕлле хурчĕ тытса ял хуçалăх производство кооперативĕн е килти хушма хуçалăхăн экономикине тĕреклетесси – ял хуçалăх отраслĕн пĕр енĕ. Çакă вăл ĕмĕртен пыракан чăнлăх. Пыл хурчĕ тытасси – ответлă ĕç. Ку ĕçе чунĕпе парăннă çын Турă кайăкĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарни укçа-тенкĕпе пĕрлех сывлăх та парать. Ăна шута илсех тăрăшуллă ĕçпе район администрацийĕн культура пайĕ 2010 çулта ятарлă грант çĕнсе илчĕ. Унпа килĕшуллĕн çав çулхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче пирĕн районта "Сывлăх пыл хурчĕн çунатти çинче" ятпа республикăра пĕрремĕш хут пыл уявĕ иртрĕ. Иртрĕ те Муркаш енре ырă ĕçсен тарăн йĕрне хăварчĕ. Унтанпа вăл çулленхи уяв пулса тăчĕ. Хурт-хăмăр ĕрчетессипе Муркашсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулнине çулсерен хамăр куçпа курса тăратпăр.

Сывлăх пыл хурчĕн çунатти çинче



ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Н. Ванеркин тата район пуçлăхĕ И. Николаев (сулахайран 2-мĕшпе 4-мĕшĕ) утарçăпа пĕрле.



Чуманкасси ял тăрăхĕнчи В. Васильев утарçă хăйсен ялĕнчи нумай ачаллă Вера Афанасьева çемйине пыл парнелерĕ.



Çатракасси ял тăрăхĕн пыл «базӗ» хăйĕн пуянлăхĕпе уявра кашнинех тĕлĕнтерме пултарчĕ. В. Трофимов утарçă хурт-хăмăр хатĕрĕсемпе паллаштарать.

**Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн С. Павловăн саламлă сăмахĕсем:**

***– Пыл уявĕ йĕркелекенсене тата унăн ĕçне хутшăнакансене уяв ячĕпе ăшшăн саламлатăп, ырă пуçарусене кун йĕркинчен кăлармасăр çирĕп аталантарма ырлăх-сывлăх, телей, çăмăл мар ĕçре ăнăçу сунатăп!***

***Чăваш Республикинче хурт-хăмăр ĕрчетессипе халĕхи вăхăтра 300 ытла ял хуçалăх предприятийĕпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ĕçлеççĕ. Çак ырă ĕçе 6 пин ытла килти хушма хуçалăхра аталантараççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа чăваш пылĕн хакĕ те, хисепĕ те çулсерен ӳссе пырать.***

***Пыл хурчĕ ĕрчетесси – пĕтĕм агропромышленность комплексĕшĕн пĕлтерĕшлĕ отрасль. Вĕлле хурчĕ паха продукт – пыл – панипе пĕрлех ял хуçалăх культурисене шăркалантарса тухăçа ӳстерет.***

***Эсир ирттерекен уяв хурт-хăмăр олтраслĕне пулăшас ĕçри пĕр утăм, анчах пысăк утăм.***

УЯВ АНЛĂ ИРТРĔ

Вĕлле хурчĕ общество пурнăçĕшĕн, халăх сывлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнипе пĕрлех хăй тĕлĕшпе те пысăк тимлĕх ыйтать. Çавăнпа та республика шайне çĕкленнĕ "Сывлăх пыл хурчĕн çунатти çинче" уяв никĕсĕнче хурт-хăмăр сывлăхĕшĕн тăрăшасси те тĕп вырăнта пулчĕ: сывă мар хуртран сывă продукци илеймĕн. Çакна уява уçса унта хутшăнакансене саламласа та хисеплесе каланă хăйĕн сăмахĕнче район пуçлăхĕ И. Николаев та палăртрĕ. Районти ĕçченсем хăйсене шанса панă ĕçре вĕлле хурчĕсем пек тăрăшуллă пулнине хамăр ен ыранхи кунпа пурăннине çирĕплетекен тĕслĕх тесе танлаштарчĕ Игорь Васильевич.

– Пĕрлешуллĕ кооперативра-и е хресчен (фермер) хуçалăхĕнче, е килти хушма хуçалăхра, анчах ĕçчен çын пыл хурчĕ тытас ĕçре ответлăх чакармасть. Вăл Турă кайăкĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарни вара укçа-тенкĕпе пĕрлех сывлăх та парать, ял хуçалăх производствине аталантарма пулăшать. Пирĕнтен нумайăшĕ паян хăйĕн пурнăçне вĕсемпе ĕçлемесĕр курмасть те. Паянхи пек уявсем утарçăсене пĕр чăмăра пухаççĕ, çĕнĕлĕхсемпе паллашса малашлăх утăмĕсене палăртма май параççĕ, – палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев хурт-хăмăр олтраслĕнче мал туртăмлă ĕçлекенсене Хисеп хучĕсемпе Тав çырăвĕсем панă май.

Районта иртнĕ "Сывлăх пыл хурчĕн çунатти çинче" пыл уявĕ кăçал çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче район центрĕнче пулчĕ. Вĕлле хурчĕпе туслисене çак кун пĕрĕхсе тăнă çумăр та пĕрле пухăнма чараймарĕ. Уявра хăнасем те чылай пулни районти уяв республика шайне тухас çул çинче пулнине çирĕплетрĕ. Çакна Комсомольски районĕнчен килнĕ утарçăсем те пытармарĕç. М. Пильщикова, В. Николаев, А. Степанов пирĕн район тĕслĕхне хăйсем патĕнче те сарас ĕмĕт çуралнине пĕлтерчĕç. Хăнасем хушшинче Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар, Красноармейски, Етĕрне районĕсен утарçисем, Марий Эл Республикин делегацийĕ пулни уяв калăпăшне ӳстерчĕ çеç.

ПУРТЕ МАТТУР!

– Халăх сывлăхне сыхлас тата упрас тĕллевпе ылтăн хуртăн пĕлтерĕшне сивлекен çуках-тăр. Çав вăхăтрах вĕлле хурчĕ хăй тĕлĕшпе те пысăк тимлĕх ыйтать. Çакна тĕпе хурса пирĕн малашнехи ĕçсене йĕркелемелле. Çĕнĕлĕхсене вăхăтра алла илмесĕр хăнасем умĕнче пит хĕретмелле ан пултăрччĕ, – терĕç утарçăсене пурнăçланă ĕçĕсемшĕн тав туса тата умри тĕллевсене палăртса Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Н. Ванеркинпа В. Мидуков.

Хурт-хăмăр ĕçчен те сăпайлă çынна юратать. Унăн аллинче вăл хунать, ăнать, çултан-çул ытларах продукци парать. Районта вĕлле хурчĕ ĕрчетекенсем – шăпах çак карта ларакан ĕçченсем. Уява тухнă утарçăсенчен çаксене палăртассăм килет: Нина Кожевникова, Альбина Кондратьева, Константин Антонов, Владимир Михайлов, Юрий Ванюшкин, Егор Васильев, Николай Данилов, Георгий Крысин, Юрий Вязов, Владимир Васильев, Ираида Михайлова, Юрий Егоровпа Сергей Егоров т. ыт. те. Вĕсем хăйсен ĕçчен тусĕсемпе пĕр чĕлхе тупнă темелле ĕнтĕ. Çавăнпах ĕçри ӳсĕмсем те çулленех сумлă.

Уявăн тепĕр пайĕнче районти утарçăсем нумай ачаллă çемьесене пылпа чыслани хурт-хăмăр отраслĕн малашлăхне интереслекенсем пысăк тĕкĕ пулнине çирĕплетрĕ.

Официаллă чыславпа тата «Сывлăх» ФСК умĕнче иртнĕ суту-илӳпе паллашнă хыççăн хурт-хăмăр отраслĕн малашлăхĕпе интересленекенсем «çавра сĕтел» хушшине пухăнчĕç. Кунти калаçу пыл хурчĕсене чиртен сыватасси, профилактика ĕçне вăхăтра туса пырасси, çаксем таса продукцие ытларах илме пулăшасси, хатĕр продукцие анлăрах усă курасси пирки пулчĕ. Хурт-хăмăр çемйисене наука ыйтнă пек пăхса тăрасси пирки «Хурт-хăмăр агентстви» акционерсен усă обществин генеральнăй директорĕ Г. Максимов нумай тĕслĕхпе çирĕплетсе каласа пачĕ. Геннадий Антонович калаçăвĕнче пыл хурчĕсене технологипе килĕшуллĕн пăхасси тĕп вырăнта пулчĕ. Ку ыйтăва сӳтсе явнă çĕрте утарçăсем те хăйсен сĕнĕвĕсемпе, вуншар çул ĕçлесе пухнă опытри ĕç тĕслĕхĕсемпе паллаштарчĕç. Туслă калаçура ăша илмелли, вĕренсе юлмалли, çĕннине епле пурнăça кĕртмелли çул-йĕр нумай пулчĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Общество пĕрлешĕвĕсене пĕлме

## Кандидатурăсем сĕнме вăхăт

Федерацин 2008 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнчи 76-ФЗ № «Об общественном контроле за обеспечением прав человека в местах принудительного содержания и о содействии лицам, находящимся в местах принудительного содержания» Саккунĕпе килĕшуллĕн Чăваш Республикин общество сăнав комиссийĕн йышне кĕртме кандидатурăсем сĕнмелли вăхăт пуçланчĕ.

Чăваш Республикинчи общество пĕрлешĕвĕсене общество сăнав комиссийĕн йышне кĕртме кандидатурăсем тăратма сĕнетĕп. 60 кун хушшинче Раççей Федерацийĕн общество палатин секретарĕ Е.П. Велихов ячĕпе кандидатсен заявленийĕсене тата федераци саккунĕпе пăхнă ытти документсене ярса парас пулать.

РФ субъекчĕсенче общество сăнав комиссийĕсене йĕркелесси пирки панă сĕнӳсене Раççей Федерацийĕн общество палатин сайтĕнче (http://www.oprf.ru/) вырнаçтарнă.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 8(495) 221-83-63 хушм. 2043.

**Е. ВЕЛИХОВ,**
**РФ общество палатин секретарĕ.**

Пысăк спорт

## Çичĕ ылтăн

Çăмăл атлетика енĕпе Мускаврa иртнĕ вун тăваттăмĕш тĕнче чемпионачĕ вырсарни кун вĕçленчĕ. Ылтăн медальсен шучĕпе Раççейăн пĕрлештернĕ команди ыттисенчен малта. Пурĕ вара Раççей çăмăл атлечĕсем 17 медаль çĕнсе илме пултарнă: 7 ылтăн, 4 кĕмĕл тата 6 бронза медаль.

Америкăн пĕрлешуллĕ штачĕсен команди 25 медаль пухнă, вĕсен шутĕнче – 6 ылтăн, 13 кĕмĕл тата 6 бронза.

Ямайка спортсменĕсем те ăмăртура 6 хут çĕнтерӳçĕ пулнă, кунпа пĕрлех вĕсем 2 кĕмĕл тата 1 бронза медале тивĕçнĕ.

Хула кунĕнче

## Чăвашсен рекорчĕ

Шупашкар хули хăйĕн 544-мĕш çуралнă кунне зарядкăран пуçларĕ. Августăн 18-мĕшĕнче тĕп хулари Хĕрлĕ лапамра Шалти ĕçсен министерстви палăртнă тăрăх 28 пин ытла çын зарядкăна хутшăннă. Çак пысăк йышпа зарядка тунине çирĕплетекен документсене йĕркелесе çитерсен çитес вăхăтрах вĕсене Гиннес рекорчĕсен кĕнекине кĕрес тĕллевпе ярса параççĕ.

Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев та зарядкăна çемйипех хутшăннă, республикăри паллă спортсменсем, министерствăсемпе ведомствăсен ертӳçисем те ыттисемпе пĕрлех тĕрлĕ хусканусем тунă. «Ирхи зарядка – çăлтăрпа пĕрле» ятпа иртнĕ зарядкăн «çăлтăрĕ» Виктор Логинов актер пулнă. Зарядкăна республикăри сывлăха çирĕплетекен аэробика федерацийĕн ертӳçи О. Вербина тата унти воспитанниксем ертсе пынă.

Муркашсем Шупашкарти ирхи зарядкăна пурĕ 36-ăн хутшăннă.

Аукцион

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО КОНКУРСА**

1. Наименование конкурса – открытый конкурс на право обслуживания внутрирайонного маршрута регулярных пассажирских перевозок автомобильным транспортом «Моргауши–Акрамово», организуемого сверх муниципального заказа в Моргаушском районе Чувашской Республики.
2. Форма торгов – открытый конкурс.
3. Конкурс проводит: Администрация Моргаушского района Чувашской Республики.

Место нахождения: Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6.

Почтовый адрес: 429530, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6.

Адрес электронный почты: okc@morgau.cap.ru.

Конкурсная документация на сайте администрации района: **http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71**

4. Предмет конкурса: На право обслуживания маршрута регулярных пассажирских перевозок автомобильным транспортом, организуемого сверх муниципального заказа по следующему внутрирайонному автобусному маршруту:

Лот №1 по маршруту «Моргауши–Акрамово – 29,6 км» (с понедельника по пятницу):

- отправление из с. Моргауши:

7 час. 40 мин.; 8 час. 40 мин; 9 час. 40 мин; 10 час. 40 мин; 13 час. 10 мин; 14 час. 10 мин.; 15 час. 40 мин;

- отправление из с. Акрамово: 7 час. 00 мин.; 8 час. 00 мин; 9 час. 00 мин; 10 час. 15 мин.; 12 час. 50 мин.; 13 час. 50 мин.; 15 час. 20 мин.

Требование к подвижному составу: 3 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

5. Порядок и место получения конкурсной документации:

Конкурсная документация предоставляется по письменному заявлению в адрес организатора конкурса по адресу: 429530, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 206.

Плата за предоставление конкурсной документации не взимается.

6. Время и место проведения конкурса: 10-00 час. 20 сентября 2013 года, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 206.

Заявки подаются в рабочие дни с 8-00 час. до 17-00 час. (обед с 12 до 13 час.) с 21 августа 2013 года и до 17-00 час.19 сентября 2013 года.

7. Показатели и порядок оценки квалификации участников конкурса:

Показатели и порядок оценки квалификации участников указаны в «Информационной карте конкурса».

Кĕр аки – 2013

# Макар уйĕ хăвăрт шуралчĕ



(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Кĕрхи культурăсем валли нӳрĕк яланах çителĕклĕ пулнине кура вĕсем çулленех пысăк тухăç пани паллă. Çакна шута илсе хуçалăхсем кĕр аки валли агротехникăна пăхăнса анасем хатĕрлеме çур акире пысăк лаптăксене пусу хăварчĕç, вĕсене çу каçа технологие пăхăнса тирпейлĕ пăхса тăчĕç. Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра иртнĕ кĕçнерни кун, çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче, «хурçă утсем» хатĕр çĕр çинче кĕрхи культурăсем акас ĕçе кӳлĕнчĕç. 270 гектар йышăнакан Макар уйĕ ака агрегачĕсен шавĕпе тулчĕ. Шутлă кунсенче Николай Оньковпа Михаил Атласкин тытса пыракан МТЗ-82 тракторсем йĕкĕрлĕ сеялкăсемпе пусу хăварса технологие пăхăнса акана хатĕрленĕ асăннă хире шуратса хăварчĕç. Акнă гектарсене çийĕнчех пусăрăнтарассине те кая хăвармарĕç.

– Пирĕн ĕçченсем кĕрхи кун шута юратнине ăнланаççĕ. Çавăнпа та уяр кунсен кашни саманчĕпе тулăх усă курассишĕн тăрăшаççĕ. Механизаторсемпе пĕрлех унччен вырмара хиртен йĕтем çине тырă турттарнă, халĕ вара ака агрегачĕсем патне вăрлăх кăларса тăракан Юрий Михайловпа Виталий Романов водительсем те паян ырă сăмаха тивĕç. Александр Андреев, Вячеслав Пугачев, Юрий Шушкин, Игорь Спаскин акаçăсем те кĕр аки пахалăхĕшĕн ырмиканми тăрăшаççĕ, – ĕçченсен тăрăшулăхĕшĕн савăнса калаçать хуçалăх ертӳçи Виталий Семенов.

Кĕртрисем 300 гектар акма планланă хуçалăх пусу хăварнă çĕрсене 400 гектар ытла акма юрăхлă туса çитернĕ. Кĕрхи культурăсене çĕнĕ тыр-пултан акасси те Муркашсен ĕнерхи куна юлнă. Кăçал вĕсем ака вăрлăхне йăлтах куçăмлă фондран илеççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – экономикăпа АПК аталанăвĕн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертӳçи В. Ананьев вăрлăха куçăмлă фондран илни технологие пăхăннин тепĕр енĕ тесе палăртрĕ. Вăхăтра паха вăрлăха çĕре варăнтарни пурăна киле тухăçпа хуçалăх кĕлетне çаврăнса çитĕ тесе шутланине ырламалла кăна.

Акана тухрĕç тенĕрен, хуçалăх кăçал тĕпрен илсен йăлтах «Московская-39» кĕрхи тулă акас тĕллевлĕ пулчĕ.

– Технологие пăхăнса тăрас тĕллевпе ĕçсене хăй еккипе ямарăмăр. Акаçăсем те хăйсем умне лартнă тĕллеве ăнланнине ĕçпе çирĕплетрĕç. Тавах вĕсене пурне те, – терĕ юлашки гектарсене акма хыпаланакан агроном Владимир Димитриев. – Аслă асаттесемех кĕрхи тырăна кĕл çине пулсан та вăхăтра акса хăварма каланă. Шутласа тупнă сăмахсем мар вĕсем – çĕр ĕçченĕ çĕршер çул тĕрĕсленĕ ĕç чăнлăхĕ.

– Никамăн та паха вăхăта канура ирттерес шухăш çук. Кашниех ĕç планĕпе палăртнă 300 гектара вăхăтра акса хăварасшăн. Çакă пирĕн çитес çулхи ăнăçăвăн никĕсĕ пулнине ăнланатпăр, – кăмăллă калаçать 35 çул уйхир ĕçĕсене хутшăнакан Ю. Михайлов водитель хăйĕн ĕçтешĕ В. Романов çине кăмăллă пăхса.

Акă йĕкĕрлĕ сеялкăсене пушатнă ака агрегачĕсем черетлĕ çаврăм туса уй хĕрне тухрĕç. Шăпах çак вăхăтра хуçалăх ертӳçи В. Семенов вĕсемпе ĕçлĕ калаçу ирттернĕ хушăра акаçăсен пĕрлехи ушкăнне сăн ӳкерме май пулчĕ **(сăн ӳкерчĕкре).**

Уй-хир хастарĕсем пĕрлехи вăйпа-тăрăшулăхпа 350 гектар (117 процент) кĕртрисем акса хăварчĕç те ĕнтĕ. Çитес кунсенче ку ĕç вĕçленĕ. Кашни ĕçе вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлассишĕн вăй хуракан Муркашсен тăрăшулăхĕ харама каймасса шанатпăр. Пĕрлехи ĕç халăх мулне çаврăнтăр.

**А. БЕЛОВ.**

Аукцион

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО АУКЦИОНА**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее – организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее – аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 14.08.2013 г. № 868.

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

Контактные лица: Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66.

Характеристика объектов аренды:

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:200102:144, категории «земли сельскохозяйственного назначения». Местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:200102, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 1131287 кв.м.

Обременения: земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

Ограничения использования земельного участка отсутствуют.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) – 80100 (восемьдесят тысяч сто) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (16020 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (4005 руб. 00 коп.).

Срок аренды – 5 лет.

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:000000:373, категории «земли населенных пунктов». Местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Оринкинское сельское поселение, д.Семеньказы, ул.Новая, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв.м.

Обременения: земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

Ограничения использования земельного участка отсутствуют.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) – 2855 (две тысячи восемьсот пятьдесят пять) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (571 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (142 руб. 75 коп.).

Срок аренды – 5 лет.

Информация о проведении аукциона:

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц.

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 21 августа 2013 года по 24 сентября 2013 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312.

Дата, время и порядок осмотра земельного участка на местности: по предварительной записи в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района после публикации данного извещения.

Требования к участникам аукциона:

